# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

48 (7473) № * Шăмат кун, 2007 çулхи июнĕн (çĕртме) 9-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


## Савăнар-и Акатуйра!




*Çулленех çурхи уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ май районта Лантăш вăрманĕн уçланкинче Акатуй уявне ирттерессĕ. Кăçал вăл майăн 10-мĕшĕнче иртет. Уяв программи пуян. Пурне те хапăл туса кĕтеççĕ уява.*

**ХИСЕПЛĔ ЮЛТАШСЕМ, ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире ĕçпе юрă тата спорт уявĕ – Акатуй ячĕпе саламлатпăр!

Авалтанпах чăваш çĕрĕ çинче çурхи уй-хир ĕçĕсене вĕçленин уявне, «суха пуçĕпе çĕр туйне» паллă тăваççĕ. Йăлана кĕнĕ тăрăх çак кун ял хуçалăх предприятийĕсен экономика ăмăртăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетеççĕ, мала тухнисене, производствăра пысăк кăтартусем тунисене тата обществăлла пурнăçа активлă хутшăнакансене чыслаççĕ.

Ял хуçалăхĕ Раççейпе Чăваш Еншĕн чи пысăк пĕлтерĕшлĕ отрасль пулса тăрать, çĕршывра тата республикăра пурăнакан çынсен виççĕмĕш пайĕшĕн вара – пурнăç йĕрки. «Единая Россия» «Агропромышленность комплексне аталантарасси» приоритетлă наци проектне тата «Раççей агропромĕ» парти проектне пурнăçа кĕртме активлă хутшăнать. Иртнĕ çул кăна Чăваш Республикин ял хуçалăхне аталантарма 5 миллиард тенкĕ ытла хывнă, çĕнĕрен 92 ял хуçалăх производство кооперативĕ йĕркеленĕ, 15 пине яхăн çемье килти хушма хуçалăха аталантарма çăмăллатнă кредитсем илнĕ. Ку кăтартупа республика пĕтĕм Раççейĕпе малти вырăнта.

Кăçал уява ял çыннисем лайăх кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ. Хаклă ял ĕçченĕсем, эсир чуна парса ĕçленипе, çĕрпе типтерлĕ пулнипе тата ăна йĕркеллĕ пăхса тăнипе республикăра ял хуçалăхĕ пĕр тикĕс аталанать, çынсен пурнăç шайĕ ӳссе пырать.

Пурсăра та сире ырă пуçарусенче телей, сывлăх, ăнăçусем тата лайăх кăмăл сунатпăр.

**Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕ.**

### Республикăра

## Бюджета пĕрремĕш вулавпа йышăннă

Парламент пĕрремĕш вулавпа патшалăхăн 2008–2010 çулсенчи бюджет проектне йышăннă. Ку документшăн 319 депутат сасăланă, 81 хирĕç пулнă тата 27-шĕ тытăнса тăнă.

Раççей Патшалăх Думин депутачĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») фракци членĕ **Павел СЕМЕНОВ:**

– Ку вăл федераллă бюджета виçĕ çуллăх – 2008–2010 çулсем валли йышăнни Раççей историйĕнче пĕрремĕш хут. Паян эпир ыранхи кун пирки шутлама пултаратпăр кăна мар, малашлăха çирĕппĕн пăхма, çĕршыв çитес çулсенче мĕнле аталанса пырассине планлама та пултаратпăр. Паян патшалăхăн бюджет политики экономикăн приоритетлă енĕсене пурнăçлассипе, социаллă ыйтусене татса парассипе çыхăннă. Юлашки çичĕ çул хушшинче экономика вăтамран 7-шер процент ӳсĕмпе аталанать.

Бюджета пĕрремĕш вулавпа йышăниччен эпир ăна хамăр хушăра сӳтсе явман мар ĕнтĕ. Депутатсем министрсем умĕнче хăйсен сĕнĕвĕсене пачĕç. Мĕн интереслентерет-ха пире: ял хуçалăхĕ, эмелсемпе тивĕçтерессипе, пенсисен виçине ӳстересси. Эпир çак ыйтусене шута илме тивĕç. Виçĕ çуллăх бюджет вăл – В. Путинăн планĕн тĕп тытăмĕ. Вăл çынсен пурнăç шайне ӳстерсе пырассипе çыхăннă.

Уйрăмах пенсисен виçине пысăклатма пăхнă. Унăн база пайĕ 5105 тенкĕпе танлашмалла. Кунпа пĕрлех çар çыннисен окладчĕсене ӳстереççĕ, сывлăха сыхлас, вĕрентӳ, культура ĕçĕ-хĕлĕ валли укçа-тенкĕ ытларах уйăрма пуçăнаççĕ. Çĕршывĕпе ĕç укçи вăтамран 94 процент ӳсмелле. Унăн вăтам шайĕ уйăхне 20 пин тенкĕ ытларах пулĕ. Чи пĕчĕк ĕç укçин виçине пурăнма кирлĕ минимумпа танлаштарма пăхнă.

Ял хуçалăхĕ енĕпе наци проекчĕ ăнăçлă пурнăçланать. Агропромышленность комплексĕ аталанать. Анчах та инвестицисене ӳстермелле. Пирĕн çакна манма кирлĕ мар: çĕршывра 40 миллион çын ялта пурăнать, апла пулсан ял хуçалăхне пулăшмалла, фермер хуçалăхне аталантармалла. Пирĕн тӳрремĕнех хутшăнас пулать çак ĕçе. Ял хуçалăхне пулăшма бюджет укçи-тенкине ытларах уйăрассишĕн малашне те çине тăрăпăр.

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пирки вара çавна каламалла. Реформăна пурнăçа кĕртме тата çынсене ишĕлчĕк çуртсенчен куçарма 250 миллиард тенкĕ уйăрнă. Бюджетран уйăрнă кашни пус укçапа тухăçлă тата пахалăхлă усă курмалла. Кун пирки Раççей Президенчĕ хăйĕн Çырăвĕнче те асăнчĕ, пире, депутатсене, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партие бюджет укçи-тенкипе епле усă курнине çирĕп тĕрĕслесе тăма ыйтрĕ.

«Пĕрлĕхлĕ Раççей» социаллă статьясене финансласси çине тимлĕх уйăрчĕ. Иккĕмĕш вулав валли бюджетра çамрăксене пулăшассин, стипендисене индексацилессин тата вĕрентӳ кредичĕсене аталантарассин ыйтăвĕсене сӳтсе явма пăхнă.

Иккĕмĕш вулавпа бюджета июнĕн 29-мĕшĕнче пăхса тухмалла. Пирĕн, Патшалăх Думин депутачĕсен, çак кун валли вуншар сĕнӳ хатĕрлемелле.

### Цифрăсен чĕлхипе

## Аталану çулĕпех пыратпăр

Районĕпе ĕçлеме пултаракан 18230 çын шутланать. Ача сачĕсене 1275 ача, шкулсене 4855 ача çӳрет. Пенсионерсем 10287 çын.

Кăçалхи пилĕк уйăхра 170 ача çуралнă. Ку вăл пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен 29 ача нумайрах. Вилекенсен йышĕ вара 10 çын чухлĕ чакнă, 284 çынпа танлашнă.

Çак тапхăрта ял хуçалăх предприятийĕсем 124288,5 пин тенкĕлĕх продукци туса хатĕрлесе ăсатнă. Ку вăл, унчченхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, 104,7 процент пулать. Промышленность продукцине туса кăларасси 65 процент ӳснĕ, пĕтĕмĕшле 232886,7 пин тенкĕпе танлашнă. Ӳсĕмлĕ ĕçлекен коллективсенчен Муркашри кирпĕч заводне, «Моргаушагропромснаб» предприятие, «Моргауши-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна, «Моргаушрайгаз» филиалне, Муркаш почтамтне асăнмалла.

Ял тăрăхĕсен тупăшĕ 3218,5 пин тенкĕпе танлашнă. Ку вăл, пĕлтĕрхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, 145,1 процент пулать. Пĕтĕмĕшле тупăш вара 19496,7 пин тенкĕ пулнă (182,7 процент).

Çулталăк пуçланнăранпа 31988,9 пин тенкĕлĕх (107,8 процент) тӳлевлĕ пулăшу панă. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх муниципаллă предприятийĕн ертсе пыракан компанийĕ, «Моргаушрайбыт» предприяти ку енĕпе ăнăçлă ĕçленĕ. «Моргаушрайгаз» филиалĕнче вара кăтарту 80,6 процентпа кăна танлашнă.

Ваккăн тавар сутассин калăпăшĕ ӳссе пырать. Тавар çаврăнăш калăпăшĕ Мăн Сĕнтĕр райповĕпе 49780 пин тенкĕпе, Муркаш райповĕпе 80716 пин тенкĕпе танлашнă. Ку кăтартусем унччехи çулхинчен самай пысăкрах.

Обществăлла апатлану предприятийĕсем те япăх мар ĕçленĕ. Унăн калăпăшĕ Мăн Сĕнтĕр райповĕпе 10180 пин тенкĕпе, Муркаш райповĕпе 7425,1 пин тенкĕпе танлашнă е 119,7 тата 106,8 процент.

Пĕтĕмĕшле 2627,4 тонна аш-какай туса илнĕ (101,6 процент). Вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 1034,9 тонна, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 69,1 тонна, уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче 1523,4 тонна. Ку кăтартусем иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен пысăкрах.

Ĕнесенчен пĕтĕмпе 18625,5 тонна сĕт туса илнĕ. Çав шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 5426,6 тонна, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 114,2 тонна тата уйрăм хуçалăхсенче 13084,7 тонна. Ку кăтартусем иртнĕ çулхинчен пысăкрах. Кашни ĕне пуçне вара вăтамран 1632 килограмм сĕт туса илнĕ.

Самăртма хупнă мăйракаллă шултра выльăхсем талăкра вăтамран 563 грамм (иртнĕ çул 509 грамм), сыснасем 312 грамм (иртнĕ çул 339 грамм) ӳт хушнă. Пĕтĕмпе 1563 пăру, 10444 çура илнĕ. Ку кăтартусем иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен пĕчĕкрех.

Усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне илес пулсан, 41,7 центнер аш-какай, 123,3 центнер сĕт туса илнĕ.

Ял хуçалăх предприятийĕсенче 20901 пуç мăйракаллă шултра выльăх шутланать. Вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 8126 пуç, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 104 пуç, килти хушма хуçалăхсенче 12671 пуç. Сыснасем 24808 пуç. Ытларахăшĕ ял хуçалăх предприятийĕсенче – 15515 пуç.

Лашасен йышĕ чакса пыни палăрать. Иртнĕ çул çак вăхăта вĕсем 504 пулнă пулсан, кăçал 400 çеç. Хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 4 лаша, уйрăм хушма хуçалăхсенче 75 лаша шутра.

Ял çыннисенчен 1339 тонна сĕт сутăн илнĕ. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, 131,2 процент пулать. Икĕ райпо коллективĕ те сĕт сутăн илессипе унчченхинчен ӳсĕмлĕрех ĕçленĕ. Муркаш райповĕ 467,6 тонна, Мăн Сĕнтĕр райповĕ 262,4 тонна сĕт пухнă. Ытти предприятисемпе тата заводсемпе ку кăтарту 609 тоннăпа танлашать.

Кунпа пĕрлех районĕпе 227,5 тонна аш-какай сутăн илнĕ. Икĕ райпо коллективĕ те ку енĕпе кăтартусене чакарнă.

Унччен ĕççĕррисем 74 çын шутланнă пулсан, кăçал – 78 çын. Ĕççĕрлĕх шайĕ 0,37 процентпа танлашать.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.**

### Ĕçпе кану лагерĕсенче

## Ачасем купăста лартрĕç

Районти çĕр ĕçченĕсем кăçалхи çур акине хыçала хăварчĕç ĕнтĕ. Чылай çĕнĕлĕхсемпе палăрчĕ вăл. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем паян юлашки гектарсем çинче пахча çимĕç лартаççĕ. Районĕпе кăçал вăл 61 гектар йышăнмалла. Ку ĕçпе “Свобода”, “Лидер”, “ДаАн”, Чкалов яч. хис. хуçалăхсем планланă пысăкрах лаптăксемпе палăрса тăраççĕ. Ĕçе вĕçне çитерсен, çакă та хуçалăхсен экономикине вăйлатĕччĕ.



Аслисен тăрăшулăхĕ ачасем çине те куçать. Акă çак кунсенче Оринини вăтам шкулта вĕренекенсен “Факел” ĕçпе кану лагерĕ шкул çумĕнчи çĕр участокĕ çине çур гектара майлă купăста лартса хăварчĕ. Пĕри тепринчен хастартарах вăй хучĕç Алевтина Владимировна Рожкова ертсе пыракан лагерь ачисем **(1-мĕш сăн ӳкерчĕкре сылтăмри. Сулахайри – лагерьти воспитатель Людмила Всеволодовна Родионова. Варринче – Настя Белковапа Вероника Иванова вĕренекенсем).**

– Лагере 40 ача çӳрет. Вĕсен тăрăшулăхĕпе эпир купăстасăр пуçне 40 сотка кишĕрпе хĕрлĕ кăшман, 10 сотка помидор, 20 сотка сухан, 10 сотка хăяр лартрăмăр. Вĕсене пăхса ӳстерессси тата “Оринино”, “Восток” хуçалăхсенчи кăшман участокĕсенче ĕçлесси те лагерьти ачасен ĕçĕ, – терĕ лагерь ертӳçи.

Лагерьте ачасен ĕçпе канăвне Л. Родионовапа Е. Кольцова воспитательницăсем йĕркелесе пыраççĕ. Шкул директорĕн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Т. Алексеева каланă тăрăх, шкулта ачасен 5-мĕш чĕрĕкне тĕплĕ хатĕрленнĕ. Çапла вара паян кунта 3 лагерь ĕçлет. Ĕçпе кану лагерĕсĕр пуçне шкулта “Лучики” сывлăха çирĕплетекен лагерь, юсав бригади ĕçлеççĕ. Вĕсене татах 51 ача çӳрет.

Ĕçпе кану лагерьне çӳрекенсем паян хăйсене калчапа тивĕçтерессипе пысăк тӳпе хывнă Тамара Михайловна Скворцована **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕк)** тав сăмахĕ калаççĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



### Июнĕн 12-мĕшĕ – Раççей кунĕ

1990 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн патшалăх суверенитечĕ çинчен Деклараци йышăннă. Унтанпа 17 çул çитрĕ. Раççей Президенчĕн 1994 çулхи указĕпе килĕшӳллĕн çак куна Раççей кунĕ тесе уявлама палăртнă.

### Юбилей

*Саламлатпăр*



Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, ăшă кăмăллă аннене, çывăх тăванăмăра – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Лидия Петровна ЕВДОКИМОВĂНА** 50 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр, иксĕлми телей, чун хăвачĕ, хĕвеллĕ кун-çул тата нумай-нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх сунатпăр.

Санăн ырă кăмăлушăн, чун-чĕре ăшшишĕн тав тăватпăр, сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсем, хĕрĕсем, çывăх тăванĕсем тата юлташĕсем.**

---



Юратнă мăшăра, аттене, хисеплĕ тăвана, юлташа – Муркашра пурăнакан **Артур Иванович ГЕРАСИМОВА** 50 çулхи юбилейпа саламлатпăр.

Çак юбилейпа саламланă май эпир ăна пĕтĕм чун-чĕререн юман пек çирĕп сывлăх, кулленхи ĕçре иксĕлми вăй-хал, ăшă кăмăл, телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ ывăлĕ, çывăх тăванĕсем тата юлташĕсем.**